24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
6
ШĂМАТКУН
210 (5925) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Вырăнти пичет вăрçă вăхăтĕнче

Вăрçă вăхăтĕнчи условисем партин кашни организацине питех те оперативлă ĕçлеме хушаççĕ. Парторганизацисен пĕтĕм ĕçне, вăл шутрах хаçатсен ĕçне те, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмелле.

Совет çĕршывĕн пурнăçне татса паракан çак ответлă кунсенче пирĕн çĕршыври чăн-чăн патриотсем хăйсен вăйне, пурнăçне шеллемесĕр пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеççĕ, вĕсем мирлĕ самана вăхăтĕнчи нормăсене пăрахăçа кăларчĕç, паттăрла ĕçĕн образецĕсене кăтартаççĕ. Çакна коммунистсемпе комсомолецсем пуçарса пыраççĕ. Халăхăн ĕçри тата политикăллă пысăк çĕкленĕвне организацилесе, пĕтĕм вăйăпа хурса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме вĕрентесе пырасси—парторганизацисен задачи пулса тăрать.

Халĕ массăллă-политикăллă агитаци ĕçĕ уйăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн агитаци ĕçне пĕтĕмпех çĕршыв оборонин интересĕсене пăхăнтарас пулать, халăха организациллĕ, сыхăлăхлă, дисциплинăллă пулма вĕрентесе пыни кирлĕ. Массăллă-политикăллă ĕçĕн тĕп никĕсĕ—Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх туха калани сăмах пулса тăрать. Коммунистсем, комсомолецсем, агитаторсем пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăх çинчен кашни сынпах ăнлантарса памалла, кашни сын хăйĕн тăван çĕршыв умĕнчи ответлăхне туйса илме пултартăр, çавăнпа пĕрлех вăл тăван çĕршыва тискер тăшманран сыхласа хăварас тĕлĕшпе конкретлă ĕç тутăр.

Халăх хушшинче массăллă-политикăллă агитаци ĕçне анлăн сарса пырас çĕрте вырăнти хаçатсем парторганизацисене пысăк пулăшу параççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн районсенчи хаçатсем, многотиражкăсемпе стена хаçачĕсем чылайăшĕ хăйсен ĕçне тивĕçлипе урăхлатса çĕнетрĕç, вĕсем витĕмлĕ агитаторсем, парторганизацисен шанчăклă помощникĕсем пулса тăраççĕ.

«Двухсотниксен йышне ӳстерер»,—тесе сырать çамрăксен чаплă движенийĕ çинчен Канашри вагонсем юсакан заводра тухса тăракан «Вагонник» многотиражка. Вăл хаçат кашни номертах стахановецсем мухтавлă ĕçĕсем çинчен сырать. Заводри паллă стахановец—фрезеровщик И. Осипов юлташ икĕ станок çинче ĕçлесе кашни уйăхрах нормăна 300—350 процент тултарса пырать. Тимĕрçĕсен цехĕнчи пресовщик Лашманов стахановец виç-тăвата норма тултарса ĕçлет. Цехра двухсотниксен йышĕ кашни кунах ӳссе пырать. Июль уйăхĕнче кăна 75 стахановец 2-шер норма тултарнă. Завод коллективĕн пурнăçĕнче кун пек паха примерсем нумай. Вĕсене «Вагонник» многотиражкăн кашни номерĕнчех вулама пулать. Хаçат хăйĕн пĕтĕм ĕçне оборона интересĕсене пăхăнтарса туса пырать, вăл заводра паллă агитатор пулса тăнă.

Çĕмĕрле комбинатĕнче тухса тăракан «Знамя стахановца» многотиражка та хăйĕн ĕçне вăрçăн малтанхи кунĕсенчех урăхлатса çĕнĕлле ĕçлеме тытăннă. Многотиражка кашни йĕркерех совет патриочĕн мухтавлă ĕçĕсем çинчен каласа парать. Вăл çырусене рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хăйсем çыраççĕ, вĕсем хаçат ĕçне активлăн хутшăнаççĕ.

Çакăн пек паха примерсене колхозсенчи стена хаçачĕсем ĕçĕнчен те илсе хăтартма пулать. «Победа» колхозри (Вăрнар р.) «Ударник» стенă хаçачĕ, колхоз производстви умĕнче тăракан пиртусене вăхăтра çутатас майпа, юлашки вăхăтра виçĕ кунта пĕрре тухма тытăннă. Кунсăр пуçне кашни бригадăрах хаçат тухса тăрать. Стена хаçачĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне агитколлективлă ĕçĕпе таччăн çыхăнтарса туса пыни колхозниксем хушшинче агитацине массăллă ĕçсене лайăхлатма пулăшнă.

Вырăнти хаçатсен умĕнче тăракан тепĕр пысăк ĕç вăл—халăха тăшман сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕрентсе хатĕрлес çĕрте партипе советăн тата Осоавиахимăн вырăнти организацийĕсене пулăшса пырасси пулать. Хаçатсен ку тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановлении пурнăçа кĕртесси мĕнле пыни çинчен тăтăшах çырас пулать. Çавăнпа пĕрлех сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли майсемпе инструкцисем çинчен те халăха каласа памалла. ПВХО инструкторĕсене, самозащита групписен начальникĕсене, звено командирĕсене хаçат ĕçне активлăн ăвăстармалла, вĕсем ку ĕçре стена хаçатне пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Предприятире, учрежденире тата колхозра оборонăллă-массăллă ĕç çинчен, халăха вăрçă ĕçне вĕрентес ыйтусем çинчен тăтăшах çырмалла. Çак питĕ те кирлĕ ыйтусене пĕр минутлăха та манăça хăвармалла мар. Кашни стена хаçачĕ Осоавиахимăн подразделенийĕсенче вĕренӳ пахалăхне ӳстерме, дисциплинăна çирĕплетме пулăшмалла, лайăх ĕçлекен группăсен, командăсен опычĕсене яланах çутатса, вĕсен паха примерĕсем тăрăх ыттисене вĕрентсе пымалла.

Стена хаçачĕсем Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерекен хыпарсене ĕççыпинисен сарлака массисем патне çитерес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума пултараççĕ. Вăл хыпарсем çинчен рабочисене, колхозниксене ăнланмалла каласа парас пулать. Пĕлнĕ-пĕлмен çӳлĕлтесе çӳресе суя хыпарсем, халăх хушшинче паника саракан çынсене тăрă шыв çине кăлармалла, çавнашкал çынсене хирĕç кĕрешсе пымалла.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем тата партизансем этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне—фашизма хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, вăйлăн çапăçаççĕ. Красноармеецсемпе партизансен хăюллăхĕпе паттăрлăхĕ тата тӳсĕмлĕхĕ çинчен калакан çырусене хаçатсен номертан номерах пичетлесе пымалла. Действующи арминчи боецсем хăйсен хил-йышĕсем патне, тăван колхозне, хăйсен цехри, бригадири юлташĕсем патне хăюллă çапăçусем çинчен çырса пĕлтереççĕ. Вĕсен кашни çырăвĕ пире хавхалантарать, çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет. Çавăн пек çырусем стене хаçачĕсемшĕн паха материалсем пулса тăраççĕ, вĕсемпе усă курма пĕлмелле.

Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыври халăха хăйĕн чури туса хурасшăн, вăл хăйĕн пĕтĕм хура та тискер вăйне пирĕн тăван çĕршыв çине илсе килчĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ фашизма хирĕç отечественнăй вăрçа çĕкленсе тухрĕ, тăшмана çĕмĕрсе тăкса, ăна çĕр пичĕ çинчен шăлса пăрахичченех çапăçма пулса тупа турĕ. Аслă Сталин ертсе пынипе, совет халăхĕ хăйĕн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртĕ, тăшмана татăклăнах çĕмĕрсе тăкĕ.

Польшăн ССР Союзĕнчи Посолĕ г. Кот Мускава килни

Кăçалхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче Польшăн ССР Союзĕнчи Посолĕ г. Кот Мускава килсе çитнĕ.

Мускавра С. Кот господина çаксем кĕтсе илнĕ: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй отдел заведующийĕн обязанноçĕсене туса пыраканнĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Европăри IV-мĕш отделĕн заведующийĕ В. Н. Новиков юлташ, Оборона Халăх Комиссариачĕн тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ полковник В. Н. Евстигнеев юлташ, ĕçсен вăхăтлăх поверенныйĕпе г. Ретингерпа пĕрле Польша Посольствин составĕ, Посольство советникĕпе г. Баггалейпа пĕрле Великобритани Посольствин членĕсем тата Чрезвычайнăй Посланникпе тата Полномочнăй Министрпа г. Фирлингерпа пĕрле Чехословакăн миссийĕн членĕсем.

СОВЕТ ХАЛĂХНЕ САЛАМЛАНИ

* * *

Совет правительстви ячĕпе Лондонран çакăн пек саламсем килнĕ, вĕсене ССР Союзĕн Англири посольствин илнĕ:

«Оклэнд хулинче пурăнакан 5000 çын, митинга пухăнса, Совет Союзĕ хăюллăн та витĕмлĕн хирĕç тăрса кĕрешнинчен савăнса тĕлĕнеççĕ. Пирĕн тĕллев—кирек мĕнле пулăшу парассине те ӳстересси тата туслăха вăйлатасси пулать.

Армстронг. Оклэнд хули, Англия».

«Андраи провинцинчи студентсен федерацинчен фашистла бандитсене хирĕç чаплăн çапăçакан совет халăхне салам калăр. Хĕрлĕ Çар хирĕç тăни фашизма татăклăнах çĕнтерессине шанса тăнипе вăйлатать.

Челопати Раурер, генеральнăй секратарь.

Гунтур хули, Индия».

Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ

КАНАШ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз кладовщикĕ П. Ефимов тăван çĕршыв оборонин фончĕ валли 600 грамм çу, 10 çăмарта панă. «Динамо» колхоз членĕ П. Иванов юлташ çĕршыв оборонин халăх фондне 800 гр. çу панă.

Г. ТУРХАН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче противникăнне 52 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 28 самолет пĕтнĕ.

Балтика тинĕсĕнче пирĕн авиаци тата торпеднăй катерсем противникăн транспорчĕсене тата сторожевой карапне атакăланă. Атака вăхăтĕнче торпедăсем пырса тивнипе пĕр транспорт тата сторожевой карап тинĕсе путнă, пысăккăн сиенленнипе икĕ транспорт çырана тухса ӳкнĕ.

* * *

Фронтăн кăнтăр-хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче Днепр юханшывĕ урлă каçма хăтланнă чухне нимĕçсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Нимĕçсен пехоти çĕрле юханшыв урлă каçма хăтланса пăхнă, анчах çакна пирĕн разведчиксем вăхăтра сиснĕ. Ракетăсем фашистсен переправине питех те уçăн çутатса тăнă. Пулеметсемпе минометсен батарейисем вăйлăн пеме пуçланă. Çырана тата юханшыва нимĕçсен çĕршер салтакĕсем вилсе юлнă. Тул çутăлса килнĕ чух пирĕн разведчиксем юханшыв çинче 5 километр анатра нимĕç сапĕрĕсем шыв урлă каçмалли средствăсене çĕнĕрен хатĕрлени çинчен пĕлтернĕ. Совет артиллеристĕсем пеме пуçланă. Артиллеристсен вăйлăн пенине чăтса тăрайманскăр, фашистсем каллех каялла чакнă, ăнаççăр пулнă переправа патне 300 салтака сити вилсе юлнă. Сидельников майорăн полкĕ юханшыв çинчи хăйĕн участокне çирĕплĕн сыхласа тăрать. Виçĕ кун хушшинче Сидельников юлташăн боецĕсем нимĕçсен 600 ытла салтакне, тĕрлĕрен инженернăй пурлăхне нумай пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен икĕ самолетне пырса антарнă тата противотанковăй батарейине аркатса тăкнă.

* * *

Сурçĕр флочĕн капитан Сафонов командир пулса ертсе пыракан тинĕс авиацийĕн эскадрильи нимĕç самолетĕсен группине атакăланă. Тăшман çапăçуран пăрăнма хăтланнă, анчах та пирĕн летчиксем унăн каялла каймалли çулне пӳлсе лартнă. Капитан Сафонов «Хейнкель» çине 50—70 метрлă дистанцирен пулеметран тăватă черет кăларса янă. Фашистсен самолетĕ çунма пуçласа чулту çине пырса çапăннă. Çак çĕнтерӳ хыççăн сийĕачех капитан «Мессершмитта» умран пырса атакăланă. Тăшман çапăма пуçласа, 400 метртан пеме тытăннă. Сафонов юлташ противник патне 200 метр сывăхрнă та, нимĕç çине мĕнпур пулеметсенчен пеме тапратнă. Çакăн пек вăйлăн пенине фашистсен летчикĕ чăтса тăрайман, тарса пытанма хăтланнă, анчах та аяла çĕр çумнех хăваласа пынипе, вăл чулту çине пырса тăрăннă. Çакă вăл отечественнăй вăрçă кунĕсенче капитан Сафонов перспе антарнă 11-мĕш самолет пулнă.

* * *

Днепр юханшывĕ урлă каçнă вăхăтра старший лейтенант Т. А. Никитенко юханшыв патне пымалли эпир хӳтлемен вырăна нимĕçсем тупнине тата вĕсем çакăнпа усă курма шутланнине палăртнă. Автоматсемпе тата виçĕ ручной пулеметпа хĕпăшалланнă 13 боецпа пĕрле Никитенко юлташ огневой позици йышăннă. Противника 400—500 метр сывăха килме май панă та, Никитенко юлташăн боецĕсем нимĕçсене автоматсемпе пулеметсенчен перспе çулма пуçланă. Салтаксемпе офицерсене 200 çынна яхăн çухатнă хыççăн, фашистсем каялла кайнă.

* * *

Белоруссири Полесье облаçĕнче партизанла движени ӳссе пырса хăватлă вăй пулса тăнă, çак вăй Германи оккупанчĕсене татти-сыпписĕр пыра-пыра çапать. Партизансен темиçе отрядĕнчен кăна илнĕ сведенисем тăрăх, августăн иккĕмĕш çур уйăхĕнче партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 960 çын пĕтерсе тăкнă, 17 танк, 5 бронемашина, 4 оруди, 20 пулемет, 9 миномет, 38 грузовой тата 8 çăмăл автомобиль, 340 мотоцикл тата горючи тултарнă 22 автоцистерна пĕтерсе тăкнă. Çак вăхăт хушшинчех партизансем пин винтовкăна çити, продовольстви тиенĕ 14 обоз, патронсем тултарнă 243 ещĕк тата ручной гранатăсем тултарнă 86 ещĕк тытса илсе вăрмансенче пытарнă. Сывлăшра тата çĕр çинче фашистсен икĕ бомбардировщикĕпе виçĕ истребительне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Землеустроитель Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Наровльрен çурçĕр-хĕвеланăç енчерех темиçе километрта нимĕçсен автоколонни çине тапăннă. Малта пыракан машинăн моторĕ пăсăлнипе фашистсен боеприпассем тиенĕ 12 автомашини чарăнса тăнă. Автомашинăсем чарăнса тăнине усă курса, сыхласа пыракан салтаксемпе шоферсем çул хĕрринчи вăрман усланкине пухăнса, ирхи апат тума хатĕрленнĕ. Партизансем шăппăн шăвăнса пынă та, пĕр залппа 9 фашиста вĕлернĕ. Нимĕçсем аллисене хĕпăшалсем ярса тытнă партизансем фашистсем çине ручной гранатăсем ывăтма тытăннă. Çапла вара тăшманăн татах темиçе салтакĕсемпе шоферĕсене пĕтерсе тăкнă. Ыттисем пеме чарăнса тытăкăла парăннă. Партизансем мĕнпур автоматсене взрыв туса аркатнă та, тарса пытаннă.

Ялти кооператив председателĕн арăмĕ Прасковья Т. командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ çĕрле Прудок местечкинче нимĕç мотоциклисчĕсен отрячĕ вырнаçнă икĕ çурт çине тапăннă. Малтанхи кун ăрех ĕçсе супнă фашистсем хытă сывăрнă. Çуртсенче пулнă мĕнпур фашистсене вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн, партизансем 20 мотоцикл пĕтерсе тăкнă, 10 мотоцикле хăйсемпе пĕрле илсе кайнă.

Çĕрĕç пайĕн сотрудникĕ Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Хоиники тата Бабчин хушшинче нимĕçсен консервăсем тиесе пыракан икĕ обозне тытса илнĕ. Мĕнпур возчиксене тата хуралласа пыракан салтаксене вĕлерсе пĕтернĕ те, партизансен повозкăсене вăрттăн çулсемпе вăрмана илсе кайнă.

* * *

Германи фашисчĕсем Австри халăхне чуралăха кĕртсе ӳкернĕ. Гитлер вăйпа ирĕксĕрлесех вуншар пин австриеца хĕвелтухăçĕнчи фронта хăваласа кайнă. Анчах та австриецсем Совет Союзне хирĕç вăрçастăн мар. Тытăкăна лекнисен пит нумай показанийĕсем çакна лайăх çирĕплетсе параççĕ. 44-мĕш пехотнăй дивизин тытăкăна лекнĕ салтакĕ австриец Генрих Фром çапла каланă: «Эпир Российăна хирĕç вăрçастăн мар. Пирĕн пĕртен-пĕр кăмăл — киле хăвăртрах каласси». 132-мĕш полкăн 5-мĕш ротăри салтакĕ австриец Александр Пекк çапла калать: «Австриецсем Гитлера курайманскăр тата пĕрремĕш хут май пулсанах хăйсен ирĕкĕпе тытăкăна парăнаççĕ». 168-мĕш пехотнăй дивизин 248-мĕш велоэскадрон салтакĕ Бернард Шмидт çапла каласа панă: «Пирĕн эскадронăн командирĕ австриец капитан Шайнерт пулнă. Нумаях та пулмасть ăна вырăнтан кăларчĕç. Салтаксем: нимĕçсем ăна шанмаççĕ, тесе калаçаççĕ. Унăн вырăнне нимĕçе старший лейтенант граф фон Ояленбурга лартрĕç». Германин 262-мĕш дивизин артиллери полкĕнчи унтер-офицер М. Винер çапла пĕлтернĕ: «Эпĕ Австрире çуралса ӳснĕ. Нумаях та пулмасть эпĕ килтен çыру илтĕм. Мана пата: Австрирен нимĕçсем йăлтах илсе тухса каяççĕ, тесе çырса пĕлтереççĕ. Хресченсенчен юлашки çăкăр татăкне пустарса илеççĕ. Халăх пысăк ларать». 486-мĕш полкăн тытăкăна лекнĕ салтакĕ Стефан Штицлер çапла каланă: «Фашистсем Австри халăхне выçса вилесси патне илсе çитерчĕç. Карточкăсем тăрăх паракан продуктсен рационне австриецсем нимĕçсенчен сахалрах илеççĕ. Государствăллă тата коммуналлă мĕнпур учрежденисенче нимĕç чиновникĕсем лараççĕ. Вăйпа ирĕксĕрлесех Германи çарне илнĕ нумайĕш австриецсем Гитлера поражени тӳстересшĕн тата Австрирен тепĕр хут никама пăхăнман çĕршыв туса хурассишĕн тăрăшаççĕ».

* * *

Ленинградри халăх ополченийĕн отрячĕсенчи боецсем хăйсен тăван хулине гитлерла йытăтĕвĕсенчен Хĕрлĕ Çарпа пĕрле паттăрăн хӳтлеççĕ. Фашистла ордасене хирĕç пыракан çапăçусенче халăх ополченецĕсем шикслĕхĕн тата çапăçма пĕлнни образецĕсене кăтартса параççĕ.

Халăх ополченийĕн полкĕ сыхласа тăракан участок çине танксем пулăшса пынипе немĕçсен пехоти тапăнса пынă. Тăван окопсене вырнаçса тăнă ополченецсем фашистсен танкĕсене малалла иртперсе янă та, танксем хыççăн тапăнса пыракан пехота çине пеме пуçланă. Ополченец Васильев хăйĕн винтовкинчен тĕл персе тивретсе фашистсен 14 салтакне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр çапăçура Васильев юлташ, противник пулеметран персе тăнинĕ пăхмасăрах, тăшман окопĕсем патне шăвăнса пынă та, гранатăсем ывăтса фашистсен пулеметне пĕтерсе тăкнă.

Милехин юлташăн подразделенине хăйĕнчен темиçе хут йышлăрах противник йĕри-тавра хупăрласа илнĕ, подразделени противник атакине сирсе янă, горючи тултарнă бутылкăсем тата гранатăсем ывăтса тăшманăн 5 танкне пĕтерсе тăкнă, хăвăрт та хăватлăн пырса çапнипе хупăрласа илнĕ çĕртен тухнă, фашистсен пехотине пысăк çухату кӳнĕ. Боец-ополченец Ионов çинчен тивĕçлипех хăюллă та ăслă разведчик чапĕ сарăлнă. Ионов юлташ нумай разведкăсенче пулса 35 фашиста, вăл шутрах икĕ офицера пĕтерсе тăкнă. Связист — çамрăк ополченец Андреев отлично ĕçлет. Çапăçу вăхăтĕнче пирĕн подразделенисенчен пĕрин патне приказ хăвăрт çитерсе пама приказани илнĕ хыççăн, Андреев юлташ, противник миномет-сенчен хаярăн персе пынине пăхмасăрах, икĕ километр хушшипе пырса боевой заданине срокра пурнăçа кĕртнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Сентябрĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă.

Пирĕн авиаци противникăн войскисене тата унăн аэродромĕсене пыра-пыра çапнă.

* * *

Козлов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть вăйлă çапăçусенче нимĕçсен 263-мĕш пехотнăй дивизине пысăк çухату кӳнĕ. Фашистсен дивизине çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе туса иртернĕ çапăçусем çакăн пек сарăлса кайнă. Нимĕçсем Беково высотине тата ун патне пымалли çулсене йышăнса илнĕ. Козлов юлташăн часĕнчи боецсем противника вăл йышăнса тăракан позицисенчен тимлĕн хĕсе-хĕсе кăларнă тата çав позицисене пĕрин хыççăн теприне партарнă. Кашни рубежрах нимĕçсен çĕршер салтакĕсем вилсе тата аманса выртса юлнă, нимĕçсем хăраса ӳкнипе хĕпăшалĕсене тата штаб пурлăхне пăраха-пăраха хăварнă. Беково высоти патне чакса, нимĕç дивизийĕн командирĕ генерал Хэккель дивизин çапăçас чунхавалĕ чакнине кăтартса паракан приказ кăларнă. «Ротăсенчен пĕрин çине противник тапăннă вăхăтра, — тенĕ приказра, — вырăссем ротăна пĕтĕмпех хăратса пусăрăнтарса çитернĕ. Темиçе вырăс ротăн тылне пырса тухнă. Пирĕн рота составĕнчи нумайĕш салтаксем çапăçу хирĕничен тухнă та, грузовиксем çине ларса фронт линийĕнчен темиçе километр каялла кайнă. Çакă вăл паника пуçласа яма пулăшнă». Генерал приказĕ Германи салтакĕсен çапăçас чунхавалне çĕклеймен. Фашистсем высота çинче çирĕплесе ларма тата ăна хăйсен аллинче тытса тăма пултарайман. Совет артиллеристĕсем противникăн укрепленийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн артиллери хăватлăн персе пулăшнипе Исаковпа Тихонов юлташсен подразделенийĕсем атакăна кайнă. Çĕнĕрен пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсем каялла чакнă. Пирĕн боецсем хĕпăшалсемпе салтаксене нумай тытса илнĕ. 11-мĕш ротăн салтакĕ Иосиф Фастбендер, высота çинче красноармеец тытăкăна илнĕскер, çапла каласа панă: «Çак пĕр кун хушшинчех пирĕн дивизи офицерсен составĕнчен çуррине çитĕ çухатрĕ». Нимĕçсен 263-мĕш дивизийĕн ултă кун хушшинче вилсе, аманса тата тытăкăна лексе салтаксемпе офицерсем 7.000 çынна сити пĕтнĕ. Дивизин юлашкийĕсене, çĕнĕрен туса йĕркелеме тесе, тыла илсе кайнă.

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енче Аладинский юлташ командир пулса ертсе пынипе кĕрешекен авиасоединени тăшманăн пĕр çĕре пит нумайăн пухăнса тăнă, бронетанковăй тата моторизованнăй колоннисене çĕмĕрсе тăкнă. Летчиксем Дружков, Трещев тата Зоц юлташсем 15 танк ытла аркатнă. Икĕ кун хушши çапăçнă вăхăтра авиасоединени салтаксемпе офицерсене 1000 çынна яхăн, нимĕçсен 80 танкне, 600 автомашинине тата 200 лашине пĕтерсе тăкнă. Боевой операцисенчен тавăрăннă чухне пирĕн летчиксем тăшманăн 15 самолетне тĕлпулнă. Сывлăшра çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçура нимĕçсен 6 самолетне: «Мессершмитт-109» йышши 3 самолетне, «Мессершмитт-110» йышши пĕр самолетне тата «Хейнкель-113» йышши вĕрçĕнĕ икĕ истребительне персе антарнă. Романенко, Шидловский тата Трещев летчиксем кашнинех пĕрер самолет персе антарнă. Старший лейтенант Зоц, Рыбкин летикпа пĕрле, «Мессершмитт-109» йышши самолета çĕр çине хĕсе пырса, ăна пĕтерсе тăкнă. Часть командирĕ Зуб юлташ «Хейнкель-113» йышши истребителе персе ӳкернĕ.

Кĕçĕн лейтенантăн Черняк юлташăн катерĕ икĕ транспорта хӳтлесе пынă. Çул çинче çивчĕ çуклă наблюдательсем тăшман подводнăй лодкин перископне асăрханă. Катер лодкăна атакăланă, ун çине шыв айне пăрахмалли бомбăсем кăларса ярса, ăна путарнă. Тинĕс çине çиеле калама çук пысăк кăпăксем тухнă.

Тепĕр темиçе сехетрен катер экипажĕ тăшманăн пирĕн транспорт патне пыракан иккĕмĕш подводнăй лодкине гупса палăртнă. Лодка çине шыв айне пăрахмалли бомбăсем кăларса янă. Бомбăсем çурăлса кайнă хыççăн, гидроакустически аппаратсем лодка таранине хăтартса панă. Вара катер çĕнĕрен атакăна кайнă. Шыв айне пăрахмалли бомбăсем тепĕр хут ывăтма пуçланă. Иккĕмĕш атака хыççăн аппаратсем лодка путни çинчен пĕлтернĕ. Катер икĕ транспортне те кирлĕ вырăна пĕр сиенсĕрех илсе çитернĕ.

* * *

Марковкин капитанăн эскадрильинчи тăватă бомбардировщик çине 8 «Мессершмитт» пырса тапăннă. Эскадрилья пуçĕнче пыракан летчик лейтенант Большаков нимĕç истребителĕсене хирĕç тан мар çапăçăва кĕме шутланă. Фашистсен летчикĕсем лейтанантăн самолетне пырса атакăланă, анчах вĕсене çапса аркатмаллах отпор панă. Тĕл перекен стрелок-радист Панченко пĕрин хыççăн тепринĕ 3 «Мессершмитта» персе антарнă. Ытти икĕ бомбардировщик çинчи стрелок-радистсем—Лотовпа Рагулин юлташсем—тăшманăнне кашни пĕрер самолет персе антарнă. Чĕрĕ юлнă гитлерла виçĕ летчик каялла çавăрăннă. Сывлăшри çапăçăва вĕçленĕ хыççăн, пирĕн бомбардировщиксем нимĕçсен маскировка тунă мотоколоннисене курса асăрханă. Совет летчикĕсем çийĕнчех вĕсем çине тапăнса пынă, нимĕçсен танкĕсемпе автомашинисене çапса аркатса пĕтерме тытăннă, кун хыççăн вара ăялтан вĕçсе пырса пулеметсенчен перепере нимĕç пехотин фронт патнелле куçса пыракан колоннине сапаласа янă.

* * *

Сурçĕр флотĕнчи тинĕс авиацийĕн Н-ски базинчи самолетсем фашистсен карапĕсене тата çĕр çинчи чăрĕсене ăнăçлăн çапа-çапа аркатаççĕ. Тăшман бомбардировщикĕсем базăна нумай хутчен атакăлама хăтланнă, анчах вĕсене капнинчех совет зенитчикĕсем хăвала-хăвала янă тата вĕсен юлашкийĕсене пирĕн истребительсен летчикĕсем çапа-çапа пĕтерсе пынă. База йĕриташра тăракан чултусем çине пыра-пыра çапăнса нимĕçсен çĕр самолет ытла арканса кайнă. Çак кунсенче черетлĕ тапăнура фашистсем 13 самолет сухатнă.

* * *

Отделени командирĕ сержант Аркадьев боецсен группине моторлă лодка çинче белофинсен тылне инçете кĕрсе кайнă. Çĕрле боецсем финсен йывăр артиллери дивизионне атакăланă. Салтаксене пере-пере вĕлерсе, боецсем виçĕ орудине стройран кăларнă тата боеприпассем нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çак кунсенче пирĕн авиаци тăшманăнне Ильмень кӳлинчен хĕвеланăç енне рех вырнаçнă икĕ аэродромне çапса аркатнă. Совет бомбардировщикĕсем аэродром çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Нимĕçсен вĕçсе хăпарма хăтланнă истребительне, çĕкленнĕ чухне, авиачасть командирĕ майор Грудев пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен батарейисем вăйлăн пеме пуçланă, анчах та пирĕн истребительсемпе штурмовиксем тăшмансен зенитĕсене часах шăлпантарнă. Зенитнăй орудисемпе пулеметсен расчечĕсене пĕтерсе тăксан, совет летчикĕсем нимĕçсен аэродром çинче ларакан самолечĕсене пере-пере аркатнă тата вут тĕртсе тивретнĕ. Икĕ аэродром çинче пирĕн летчиксем тăшманăнне 74 машина пĕтерсе тăкнă, вăл самолетсем нимĕç авиацин Рихтгофен генералăн корпусне кĕнĕ пулнă.

* * *

Юлашки икĕ кун хушшинче Хура тинĕс флочĕн бомбардировочнăй авиацийĕ нимĕçсен танкĕсемпе автомашинисене 40 ытла пĕтерсе тăкнă. Одесса патне пымалли вырăнсенче нимĕç войскисене хирĕç çапăçса тинĕс пехотин батальонĕсем нимĕçсемпе румын салтакĕсене тата офицерĕсене темиçе çĕр çынна пĕтерсе тăкнă. 300 салтак ытла тытăкăна илнĕ. Трофейăсен шутĕнче—икĕ оруди, пиллĕк миномет тата 18 пулемет.

* * *

Общественница-хĕрарăмсенчен темиçе çĕршер пин çын оборона ĕçне активлăн хутшăнаççĕ; ылханлă тăшмансене çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Госпитальсем валли çĕвĕ çĕлекен Ленинградри мастерскойсенче профессорсен тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсенчи сотрудниксен арăмĕсенчен 150 çын тӳлевсĕр ĕçлеççĕ. Мускаври научнăй работниксен арăмĕсен совечĕ оборона енĕпе пысăк ĕçсем туса пырать. Совет членĕн Геровскал юлташăн пуçарăвĕпе бригада тунă, çав бригада госпитальсем валли илемлĕ литература пухать, аманнисем валли концертсем организацилет, сывалаканнисен палатисенче хаçатсем вулас ĕçе туса пырать. Научнăй работниксен арăмĕ Мария Семеновна Буркова Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕ çумĕнче медицина сестрисене вĕрентме курссем организацилеме. Пурăнмалли çуртсенче уйăм санитарнăй постсем тунă, вĕсен ĕçне вăл куллен ертсе пырать. Медицина сестрисен тата санитари дружининцисен нумай тĕрлĕ курсĕсенче пиншер хĕрарăмсем—научнăй сотрудницăсем тата наука деятелĕсен арăмĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем ĕнтĕ госпитальсемпе лазаретсенче ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Мускав хулинчи общественницăсем — Осоавиахим активисткисем хĕрӳллĕ пултарулăх кăтартса пыраççĕ. Инструктор-общественница, килхуçи хĕрарăмĕ Бакулина вăрçă кунĕсенче ПВХО тата ГСО значкисчĕсене темиçе вунпар çынна вĕрентсе хатĕрленĕ. Килхуçи хĕрарăмĕ А. А. Орехова ПВХО тата ГСО нормисене пама çĕр çынна ытла вĕрентсе хатĕрлесе çитернĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсен Клименко тата Астахова юлташсен пуçарăвĕпе Вторая Тверская-Ямская урамĕнчи 26-мĕш тата 28-мĕш номерлĕ çуртсенче хĕрарăмсем виçĕ сехет хушшинче 102 килограмм цветной металл пухнă. Мускаври Первомайск районĕнчи «Москабель» заводра ĕçлекен работницăсем хăйсен районне кĕрекен пурăнмалли çуртсенче пĕр кун хушшинче темиçешер тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Тимĕр-тăмăр пухнишĕн тивекен ухса-тенкĕне хĕрарăмсем çĕршыв оборонин фондне панă.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен сентябрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ корреспондентсене Германи çарĕ вăрхурахсен, ирĕксĕрлесе пусмăрлахансен, граждăнла халăха çаратакансен тата вĕлерекенсен организованнăй банди пулса тăнине çирĕплетсе паракан хăшпĕр документсемпе паллаштарнă. Çаратнипе вĕлерекенсем çинчен калакан мĕнпур фактсене нимĕç фашисчĕсем хăйсене тивĕçлĕ цинизмпа сирсе яма пăхаççĕ. Анчах документсем урăххи çинчен каласçĕ.

Çавăн пек, сăмахран, хĕвеланăç енчи Цициха ялĕнче стена çинчен хăйпăтса илнĕ приказăн подлинникĕнче çапла калана:

«Приказ. Цициха ялĕнчи граждăнла халăха халех эвакуаци тумалла. 1941 çулти августăн 15-мĕшĕнче 00 сехет те 00 минута тĕлне ялтан тухса кайман çынсене пурне те персе пăрахмалла. Полковник (алă пуснă). 11.8.41».

Çак приказа стандартлă бланк çине, текстра ял ячĕсене тата ялтан хăçан тухса каймалли срокене çырма вырăн сиктерсе хăварса, çырнă. Ку ĕнтĕ нимĕçсем тытса илнĕ нумай районсенче пурăнакан çынсене хăйсем çурт-йĕрĕсенчен пусĕпех хăваласа кăларнине шĕлтерет, кунпа пĕрлех, беженецсем кăтартса панă тăрăх тата çакă паллă: нимĕçсем хăваласа кăларакан çынсене хăйсемпе пĕрле пĕр ялала та илсе кайма памаççĕ. Мĕнпур пурлăх, тумтирпе кĕпе-йĕм таран, оккупантсен вăрхурахла çăткăнлăхне çырлахтарма вырăнтах юлмалла.

Е акă тата тепĕр тĕслĕх: 11-мĕш çар корпусĕн командованийĕ 1941 çулти июлĕн 22-мĕшĕнче «Колхоз предприятийĕ пулнă предприятипе хуçалăх тĕлĕшĕнчен вăхăтлăх малалла усă курасси çинчен калакан тĕп положенисем» ятлă приказ кăларнă, çав приказăн 12-мĕш пунктĕнче çапла çырнă:

«Тырă капанĕсене е ытти çавăн пек ялалсене вут тивретекен яла çунтарса ярăпăр, çав ялта пурăнакан çынсенчен 50 процентне персе пăрахăпăр».

Çакнашкал сăн-сăпатлă ĕнтĕ Гитлер çарĕ. Фашистла журналистсенчен пĕри, икĕпитленсе тĕлĕннĕ пек пулса: «Çынсем пирĕн çине вăрăхурахсем çине пăхнă пек пăхаççĕ!» тесе çуйăхать пулсан, çакăнпа вăл ялалсене хăйсен чăн-чăн ячĕпе тĕллесе калать. Оккупациленĕ районсенчи çынсем кăна мар, Германия оккупациленĕ мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем кăна та мар, тата мĕнпур тĕнче Гитлер çарĕ çине ирĕксĕрлесе пусмăрлакансен, сынвĕлеренсен тата вăрхурахсен çарĕ çине пăхнă пек пăхать. Германи çарĕ çирĕплĕн çĕнтерсе илни—вăл пĕр çакă кăна.

* * *

Ютçĕршыв корреспонденчĕсене пирĕн çар чăçĕсем нимĕçсенчен тытса илнĕ приказсемпе ытти документсен фотокопийĕсене валеçсе панă.

* * *

Англири «Экчейндж телеграф» агентствин корреспонденчĕ г. Магнлов,—Швецири тата Америкăри хăшпĕр хаçатсем, Финляндипе Совет Союзĕ хушшинче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулăшнипе мир çинчен калаçусем пыраççĕ тесе пĕлтерни тĕрĕс-и?,—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ:

«Фронтра йывăр çухатусем тӳснине пула тата продовольстви тĕлĕшĕнчен çĕршыври ĕç начар тăнине пула, Финляндире мир тума ăмсанни питех те вăйлăн палăрать. Финляндие вăй çитерейми йывăр вăрçа туртса кĕртнĕ гитлерла Германине курайманни те унта ӳссех пырать. Çав условисенче Финляндири хăшпĕр хаçатсем, сăмахран, «Саво» хаçат, вăрçăран хăтăлас ыйтăва лартаççĕ пулсан, çакă вăл тивĕçлипех çапла пулмалли ĕç. Мир çинчен пыракан калаçусем пирки каласан, çав пĕлтерӳ вăл тĕрĕс мар».

Совет рабочийĕсем патне Ситрин янă послани

ЭДИНБУРГ, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Трэд-юнионсен конгресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин совет рабочийĕсем патне яма ТАСС корреспондентне çакăн пек послани панă: «Англипе вырăс профсоюзĕсен пĕрлешӳллĕ комитетне тăвасси çинчен эпир панă сĕнӳ туслă жестран та пысăкрах ĕç пулса тăнине эпĕ вырăс халăхĕ ăнланĕ тесе шанса тăратăп. Çакă вăл Совет Российине чи пысăк пулăшу пама тата çак пулăшăва вăрçăра çĕнтерниченех парса пыма Англири рабочи класс татăклăн хатĕр тăни пулать. Çак хăрушă кĕрешӳре вырăссемпе Англи халăхĕсем ирĕксĕрех тӳсекен жертвăсем пирĕн татах та сывăхрах пĕрлештерĕç. Пирĕн союз малалла та сыхланса усранассине тата нацисем хушшинчи мирлĕ пурнăçăн интересĕсеммĕн пĕршухăллă пулса усăллăн ĕçлесе пынинче палăрассине эпĕ шансах тăратăп.

Эпир вырăс рабочийĕсене çакăн çинчен шантарса калатпăр: пирĕн Англипе вырăс профсоюзĕсен комитечĕ рабочи класăн яланхи ĕçлĕ органĕ пулса тăтăр тесе, эпир мĕн май килнĕ таран пурие те тăвăпăр».

Англири железнодорожниксен нациллĕ союзĕн генеральнăй секретарĕ калани

ЭДИНБУРГ. Англири железнодорожниксен нациллĕ союзĕн генеральнăй секретарĕ тата Англири трэд-юнионсен конгресс генсоветчĕн членĕ Джон Марчбэнк ТАСС корреспондентне çакăн çинчен калана: конгресс ССР Союзĕнчи Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе сыхăнса ĕçлеме хушса решени йышăннине железнодорожниксем пĕтĕмĕшпех хапăлласа кĕтсе илеççĕ. Эпĕ хам нумай вăхăт хушши çавăн пек сыхăнса ĕçлессишĕн тăнă. Эпĕ çапла шутлатăп: англичансемпе вырăссен эпир халь тума сĕнекен профсоюз комитечĕ, Совет Союзĕн Правительстви мире юратакан мĕнпур нацисемпе, тĕнчене пайланмалла мар принцип çинче никĕсленсе тăрса, союз тума тăрăшнă вăхăтрах пулнă пулсан, эпир вăрçă пуласси сирсе ярас ĕçе чылаях пулăшнă пулăттăмăр. Çак шухăша эпĕ пĕрре кăна мар каласа панă. Англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне туни пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç союз тытса тăракан икĕ çĕршыв оборонине тĕрлелетме кăна мар, тата икĕ халăх хушшинчи туслăха çирĕплетме те пулăшнă пулĕччĕ тата çав туслăха гитлеризма çапса аркатнă хыççăн малалла тытса пыма май панă пулĕччĕ. Пирĕн çак вăрçăра çĕнтерессишĕн кăна мар, мирлĕ пурнăç тăвассишĕн тата ăна социалистла тĕрĕслĕхлĕ мирлĕ пурнăç тăвассишĕн пĕрле ĕçлемелле. (ТАСС).

Англири трэд-юнионсен конгресĕнче

ЭДИНБУРГ, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Енер тата паян конгресра генсовет отчечĕ тата уйăм резолюцисен проекчĕсем тăрăх пренисем пынă. Пренисенче машиностроительсен профсоюзĕн представителĕ, йывăç каскалакан промышленноçра ĕçлекенсен союзĕн делегачĕ Зак, асбестпа резина промышленноçĕнчи рабочисен союзĕн делегачĕ Иоцвуд, пиравăр тĕртекен промышленноçри рабочисен профсоюзĕн делегачĕ Кашоу тата ыттисем тухса калана. Конгресра Эттли сăмах калана, вăл совет войскисем паттăрăн хирĕç тăрса çапăçни çинчен шантарнă. Вăл конгреса пĕрлешнĕ рабочисене çар валли кирлĕ продукци ытларах туса кăларма чĕннĕ. Эттли: çапăçу пĕтмен-ха, тенĕ. Анчах, Англия тăрăшни тата унăн тусĕсен ĕçĕ ăнăçлă пуласси çинчен никам та иккĕленсе тăмасть. «Пирĕн икĕ ялалана тумалла мар,—тенĕ Эттли.—Пирĕн ку тарăнччен тунă ĕçсем çинче лăпланса ларма юрамасть тата вăрçăра пирĕншĕн кам та пулсан кĕрешсе илĕ тесе шухăшламалла мар. Эпĕ, правительство членĕ, çакна лайăх пĕлсе тăратăп: рабочисен организацийĕсем пĕрлешсе ĕçлени пирĕн оборонăн вăй-хăватне çирĕплетес çĕрте уйăмах çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать».

Конгресра пренисем малалла та пыраççĕ.

Англири горняксен федерацийĕн секретарĕ Эдуардс тунă заявлени

ЛОНДОН. Англири горняксен федерацийĕн секретарĕ Эдвин Эдуардс ТАСС корреспондентне çапла пĕлтернĕ: «Англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне тăвасси çинчен панă сĕнĕве эпĕ саламлатăп. 1926 çулта пынă кĕрешӳ вăхăтĕнче пире туслă пулăшу панă рабочисемпе халь каллех çĕнĕрен çыхăну тытмалла тунине хашни горняк пысăк хаваспа кĕтсе илет. Эпир, горняксем, ССР Союзĕпе çыхăну тытас тĕлĕшпе хамăр кăмăла пĕлтертĕмĕр те ĕнтĕ, совет çарĕ валли медикаментсем илме 70.000 фунт стерлинг укçа пухма йышăнтăмăр. Çав укçана пухас тĕлĕшпе малтанласа тунă ĕçсем, вăл суммăна горняксен федерацийĕн исполкомĕ палăртса панинчен ытларах пухăнассине кăтартса параççĕ. Пĕр-пĕрин шухăшне пĕлтерсе тăни тата çыхăну тытни икĕ çĕршыври рабочи классемшĕн практикăллă хаклă ĕç пулса тăрать. Кунсăр пуçне, юнĕсехен Гитлера тата цивилизаци тăшманĕсене хирĕç юнашар тăрса кĕрешекен пирĕн çĕршыври халăхсемшĕн те çав икĕ çĕршыври пысăк профсоюзсен хушшинче тунă çыхăну çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать».

Вĕренӳ ĕçне практикăпа çыхăнтарса пыратпăр

Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен специалистсем хатĕрлес ĕçре теорине çеç вĕрентни çителĕксĕр. Лайăх специалистсем хатĕрлес тесен теорине практикăпа çыхăнтарса вĕрентмелле.

Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕн çак ĕçе тума условисем çителĕклех пулман. Пĕр енчен — практика валли сехетсем сахал пулнă, тепĕр енчен — вĕренӳ хуçалăхĕ пулманпа пĕрех.

Техникум хăйĕн ĕçне çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа йăлтах урăхлатса çĕнетет. Кăçал çĕнĕ программа пулать, вĕренӳ срокĕ 4 çул вырăнне 3 çул çеç юлать.

Вĕренӳ срокне чакарни вĕренӳ программине пĕчĕклетнине пĕлтермест. Пачах урăхла. Теорине вĕренмелли сехетсем çавăн пекех юлаççĕ.

Теорине практикăпа çыхăнтарса вĕрентме техникум кăçал вĕренӳ хуçалăхĕ тухнчĕ. Техникумăн халĕ 178 гектар çĕр пур, çак çĕре 7 пусса уйăрса йĕркеленĕ. Машинăсем çителĕклĕ. Сеялка, комбайн, виçĕ трактор, молотилка, сортировка т. ыт. машинăсем те пур.

Техникум уборка вăхăтĕнче çывăхри колхозсене пулăшу парать. Колхозсенче халĕ комбайн, жнейка тата лобогрейка ĕçлеççĕ.

Хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхсем те пур. Халĕ техникум 10 лаша, 22 ĕне, 34 пăру усрать. Выльăх-чĕрлĕхсене хĕлкăсарма витесем тăваççĕ, апат-çимĕç хатĕрлеççĕ.

Кăçал пĕрремĕш çул хуçалăхра ĕçлесе студентсем уйăрăнсем çĕршывĕ аслă державăсем хушшинчи вăрçă тулашĕнче юлма тивĕçлĕ, тенипе килĕшет. Чăн та, активистски элементсем пире Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1939—1940 çулта пынă вăрçа туртса кĕртме тăрăмрĕç. Юлашки вăхăтра активистски элементсем татах пуçĕсене çĕклерĕç, вĕсем халиччен пытанарах тăнă пулсан та, эпир çакăн çинчен лайăх пĕлетпĕр. Вĕсен тулашри политикăллă программи Швеци пĕрлĕхĕн никĕсне хирĕç пырать. Швеци халăхĕн нумайрахĕш пайĕ пĕрлĕхре тăрать. Швеци правительствин çĕршыва вăрçă тулашĕнче тытас, унăн никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас политикине халăх ырлать». (ТАСС).

Швеци премьер-министрĕн выступленийĕ

СТОКГОЛЬМ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Швецин тĕрлĕ хулисенче Швеци çĕршывĕн нейтралитетне хӳтлес лозунгпа нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Келма хулинче Швецин премьер-министрĕ Генсен сăмах тухса калана. Швеци правительствин юлашки икĕ çул хушшинчи политикине пăхса тухса, Генсен çапла калана:

«Пирĕн халăх, Швеци çĕршывĕ аслă державăсем хушшинчи вăрçă тулашĕнче юлма тивĕçлĕ, тенипе килĕшет. Чăн та, активистски элементсем пире Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1939—1940 çулта пынă вăрçа туртса кĕртме тăрăмрĕç. Юлашки вăхăтра активистски элементсем татах пуçĕсене çĕклерĕç, вĕсем халиччен пытанарах тăнă пулсан та, эпир çакăн çинчен лайăх пĕлетпĕр. Вĕсен тулашри политикăллă программи Швеци пĕрлĕхĕн никĕсне хирĕç пырать. Швеци халăхĕн нумайрахĕш пайĕ пĕрлĕхре тăрать. Швеци правительствин çĕршыва вăрçă тулашĕнче тытас, унăн никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас политикине халăх ырлать». (ТАСС).

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Сывлăшран тапăннинчен ăçта тата мĕнле сыхланмалла

«Воздушная тревога» текен сигнала панă чухне эсир кирек ăçта пулсан та, яланах лăпкă пулма тăрăшăр, тата чăн малтан ăçта пытанма май пурринне тавçăрса илĕр. Кашни гражданинăн хăй пурăнакан çурт таврашĕнчи, ĕçленĕ вырăн таврашĕнчи тата ĕçленĕ вырăна каймалли çул çинчи хӳтлĕхсем (убежище) хăш тĕлте пулнине лайăх пĕлсех тăмалла.

Хӳтлĕх сывăхра çук пулсан, урăх шанчăклă вырăн тупас пулать.

Нумай этажлă чулçуртсенче ун пек вырăн вăл подвал е çурмаподвал пулма пултарать. Эсир кунта осколоксенчен, çуртран алккарахра çурăлса кайнă авиабомбăн взрывной хумĕнчен тата пулясенчен пытанса хăтăлма пултаратăр. Анчах та, ятарласа хатĕрлесе янтăламан подвалсенче çынсене нумайăн пухăнтарма юрамасть.

Подвалта чӳречесемпе алăксем тĕлĕнче тăма юрамасть,—вĕсем витĕр осколоксем пырса çапăнма пултараççĕ. Пуринчен аванни — чӳречесем хушшинчи простеноксем тĕлĕнче, подвалăн вăтам пайĕнче пытанса тăни пулать.

Подвалта пытанма май çук пулсан, çӳлти этажсенчен аялти этажсене анас пулать. Яланах шалти пысăк мар пӳлĕмсенче, чӳречесем сахалтарах çĕрте тăма тăрăшăр. Пачах чӳречесĕр пӳлĕмсем, капитальнăй стенасемлĕ, çулăма парăнман маччаллă пӳлĕмсем ытларах шанчăклă. Пурăнмалли пысăк çуртсенче ун пек пӳлĕмсем — ваннăйсем, переднисем, коридорсем, чăлансем пулса тăраççĕ. Общежитисенче, административлă çуртсенче, гостиницăсенче кун пек вырăнсем — шалти коридорсем, пуринчен ытла вĕсен капитальнăй стеналлă вырăнсем пулса тăраççĕ.

Ун пек пӳлĕмсене малтанах хатĕрлеме пулать, ăна валли перегородкăсене вăйлатмалла, пур шăтăксене те тĕплĕн хупса питĕрсе лартмалла.

Питех те кирлĕ пулсан, капитальнăй простенок тĕлне урайне ларма е выртма пулать, анчах та — чӳрече е балкон çине тухакан алăк тĕлне мар.

Йывăç çуртсем, сывлăшран тапăннă вăхăтра, хӳтлĕх вăрăнне пулма пултараймаççĕ. Вĕсем осколоксенчен те, пушарсенчен те хутĕлеймеççĕ.

Урамра, площадьре е килхушшинче, пачах уçă вырăнта тăма юрамасть.

Садра е паркра канавсемпе, пĕчĕк çырмасемпе, е ятарласа тунă шăтăксемпе усă курса пытанмалла.

Çуртсем таврашĕнче шăтăксемпе, çӳллĕ мар чул стенасемпе усă курма пулать. Çӳллĕ стенасем хыçĕнче пытанма кирлĕ мар.

Хула таврашĕнче е ялти вырăнсенче çĕр ăшне 1.8 метртан кая мар алтнă, çиелтен витсе хӳтленĕ шăтăксем шанчăклă тата час тума май пур хӳтлĕхсем пулса тăраççĕ. Шăтăксене çуртсем тата çулсем çывăхĕнче тума юрамасть. Шăтăка алтса хатĕрлемелли чи лайăх вырăн — çуртран 10—12 метр аяккарах, килхушши варринче, йывăççем айĕнче, е йывăç тĕмисем хушшинче пулать. Нӳхрепре те пытанма пулать, анчах та ун çийĕнчи çурта йывăçран туман пулсан кăна.

Пӳрт таврашĕнчи вырăна турпассенчен, çӳп-çапран, утăран, улăмран, тип курăкран тĕплĕн шăлса тасатмалла.

Шоссе е çул çинче тăма юрамасть. Хăвăртрах аяккалла чупса кайса, çултан инçетерех шăтăк, йывăççемпе витĕннĕ канав тупса выртас пулать. Çул çинче çыпçăнма нумай пулсан, тĕрлĕ еннелле чупса саланмалла. Епле пулсан та ура çинче тăма, сывлăшри çапăçăва сăнас тесе çĕкленме юрамасть, мĕншĕн тесен вăл хăрушă.

Сывлăшран тапăннă вăхăтра уйрăм ĕçсене тума хушнă граждăнсем (выранни ПВХО отрячĕсен боецĕсем, пожарнăй команда дружинникĕсем, çуртсенчи дежурнăйсем, т. ыт.) хăйсене панă инструкцисем тăрăх ĕçлеççĕ.

Полковник И. МИРОШНИКОВ.

Ыран—комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ

10 пин çын ĕçе тухаççĕ

СĔМĔРЛЕ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем сентябрĕн 7-мĕшĕнче пулса иртекен воскресникне хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Воскресникне мĕнле ирттермелли çинчен комсомол пуçламăш организацисен секретарĕсене пухса инструктаж ирттернĕ. ВЛКСМ райкомĕ учрежденисен, предприятисен тата транспорт руководителĕсемпе пĕрле хăш организаци ăçта ĕçлемеллине палăртса хунă, кирлĕ инструментсене хатĕрленĕ.

Комбинатри, промартельсенчи комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен ĕçĕнчех ĕçлеççĕ. Хулари ытти учрежденисенчи 2 пин çын чугунçул çине ĕçлеме тухаççĕ. Колхозсенчи 3 пин комсомолецсемпе çамрăксем колхозсене уборкăра пулăшаççĕ. Кашни подрайонрах шкул ачисем тĕрлĕ ĕç тăваççĕ: Алгаш подрайонĕнчи шкулсенче вĕренекенсем кăмпа татма каяççĕ, Хутарпа Кăмăл подрайонĕнче вĕренекенсем каучук тумалли ӳсен-тăрансене пухаççĕ, хулари шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсем шкулсем валли вутă хатĕрлеççĕ. Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне сентябрĕн 7-мĕшĕнче районĕпе 10 пин çын воскреснике тухса ĕç фронтĕнчи çĕнĕ çĕнтерӳсемпе паллă тăваççĕ.

БУРАВИН.

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Воскресник умĕн

СĔНТĔР. Пирĕн районри комсомолецсемпе çамрăксем те Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне сентябрĕн 7-мĕшĕнче воскресникре ĕçлесе паллă тăвас кăмăлпа çунса тăраççĕ. ВЛКСМ райкомĕ комсомол пуçламăш организацисен секретарĕсене пуçтарса воскреснике мĕнле ирттермелли çинчен ăнлантарчĕ. Районри актива уйрăм ялсовечĕссем çумне çирĕплетнĕ. Вăл кун районри пур комсомолецсемпе çамрăксем те колхозсенче уборкăра ĕçлеççĕ. Райцентрти учрежденисенчен çĕр çын ытла колхозсене уйри тырра пуçтарса кĕме пулăшма каяççĕ. Вĕсем валли ĕçре кирлĕ инструментсене йăлтах тупса хатĕрленĕ. Воскреснике шкул ачисем те хутшăнаççĕ. Районĕпе 10 пин çын воскреснике тухма хатĕр.

ГУСЕВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Воскресник умĕн

СĔНТĔР. Пирĕн районри комсомолецсемпе çамрăксем те Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне сентябрĕн 7-мĕшĕнче воскресникре ĕçлесе паллă тăвас кăмăлпа çунса тăраççĕ. ВЛКСМ райкомĕ комсомол пуçламăш организацисен секретарĕсене пуçтарса воскреснике мĕнле ирттермелли çинчен ăнлантарчĕ. Районри актива уйрăм ялсовечĕссем çумне çирĕплетнĕ. Вăл кун районри пур комсомолецсемпе çамрăксем те колхозсенче уборкăра ĕçлеççĕ. Райцентрти учрежденисенчен çĕр çын ытла колхозсене уйри тырра пуçтарса кĕме пулăшма каяççĕ. Вĕсем валли ĕçре кирлĕ инструментсене йăлтах тупса хатĕрленĕ. Воскреснике шкул ачисем те хутшăнаççĕ. Районĕпе 10 пин çын воскреснике тухма хатĕр.

ГУСЕВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Фашистла çĕлен-калтасене çĕмĕрсе тăкма

КАНАШ. Нумай пулмасть Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта оборона фондне тăвасси çинчен сӳтсе-явăрĕç. Колхозниксене агитатор И. Кузьмин юлташ оборона фондне тăвасси çинчен каласа панă хыççăн, колхозниксем пурте пĕр çын пек пулса фашистла çĕлен-калтасене çĕр çинчен шăлса ывăтниченех кашни уйăхра пĕр ĕçкунĕн тупăшне оборона фондне парса тăма пулчĕç.

Çакăн хыççăн кашни колхозник хамăрăн юратнă тăван Хĕрлĕ Çара, Флота, Авиацине пулăшма тырă, çăмарта, вылăх, укçа-тенкĕ тата заем облигацийĕсем хывма пуçларĕç. С. Филиппов, Г. Капитанов, С. Кузьмин пĕрер центнер тырă, Ф. Зайцев пĕр сурăх, И. Кузьмин, А. Софронов, Р. Петров юлташсем оборона фондне 100—200 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕç.

Августăн 17-мĕшĕнче пĕтĕм колхозлă ял массăллă воскресник туса иртерчĕ. Воскресника 300 çынна яхăн хутшăнчĕ. Вĕсен хушшинче колхозниксем, çамрăксемпе комсомолецсем, пионерсемпе шкул ачисем пулчĕç. Вĕсем çак кун ĕçленĕ ĕçкунĕн тупăшне йăлтах оборона фондне панă.

П. ЧИЧКАНОВ.

Республикăри уйăхирсенче

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Колхозсем кĕлте кĕртессипе аван çапас ĕçсене хăвăртлатсах пыраççĕ. «За коммунизм» колхоз çурхи тырăсене йăлтах вырса пĕтерчĕ. Çав вăхăтрах кĕлтесенчен 80 процентне капана хывнă. Пăрça йышши культурăсене пысăк пахалăхпа çапса пуçтарчĕ. Володарский ячĕпе тăракан колхоз та уй ĕçĕсене малта пыракан колхозсемпе танах туса пырать. Çак колхозра халь тăваттăмĕш кун сложнăй молотилкăпа аван çапаççĕ. Колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Макаров юлташ Хĕрлĕ Çара тухса кайнă хыççăн, председатель пулса ĕçлеме колхоз агрономне Киселев юлташа суйласа лартнă. «Сеятель» колхоз кĕлте кĕртсе пĕтерчĕ. Ку колозра та халь аван çапма пуçланă.

Колхозсенчи çĕнĕ кадрсене районри партипе совет тата çĕрĕç организацийĕсем енчен кулленех практикăллă пулăшу парса тăраççĕ. Акă, ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Клюков юлташ кашни кунах Володарский ячĕпе тăракан колхозра пулать. Унта вăл аван çапас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене лайăх организациленĕ. Çавăн пекех колхозсенче пĕр-пĕрине пулăшассине те сарса пыратпăр. «За коммунизм» колхоз Степан Разин ячĕпе тăракан колхоза молотилка парса пулăшрĕ.

М. ЮХТАРОВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Кĕлтене капана хывaççĕ

ВĂРНАР. Уравăш колхозĕ иртен пуçласа каçченех кĕлте кĕртет. Ыраш пуссинче çăра ларса тухнă çĕмĕлсем сахаллансах пыраççĕ. Колхозниксенчен пĕр пайĕ аван çапать. Государствăна ыраш тата тулă парса татнă. Капансем тунă çĕртре 60 çулхи колхозник Трофим Яковлев юлташ кунçăсипех капансем тăвать, каçхине итем çинчи пурлăха сыхлать.

Колхозăн кăçал тырпул вăйлă пулнă. Кашни гектартан вăтам шутпа тулă 20 центнер, ыраш — 15—16 центнер тухать.

Колхозниксем — ĕç фронтĕнчи чăнăн геройсем. Иктер норма тултараса ĕçлесси вĕсен йăлине кĕчĕ. Дария Клачкова, Федор Клименков юлташсем нормăна 2—2,5 хут иртерсе тултараççĕ.

В. МАКСИМОВ.
Н. СМИРНОВ.

Каçхи хурал

Таврана каçхи сăн карса илнĕ. Тĕттĕм. Пĕлĕтлĕ каç, çăлтăрсем курăнмаççĕ. Ик-виç утăмра çын тăрать пулсан та ăна паллама çук.

Лăпкă каç. Шăп. Паçăр анчах вăрман енче юрă сасси, хут купăс калани илтĕнетчĕ. Халь вăл та çухалчĕ. Сайра-хутра кăна таçта инçетре поезд сасси илтĕнсе каять. Вăл та пĕр вăхăтлăха çеç.

Ял халăхĕ тутлă та ăшă ыйăра. Кам калĕ çак вăхăтра сывăрман çын пур тесе. Нихăш килте те лампа çути курăнмасть.

Эпир урам варрипе пыратпăр. Хуллен утнăран ура сасси те илтĕнмест. Кăшт çеç каятпăр. Çурт умĕнчен пĕр çын утса тухни курăнать.

— Стой! — тет вăл пире асăрхаса. Эпир тăратпăр. Вăл хăвартттăн пирĕн пата утса пырать. Ку — урамри хуралçă. Вăл пирĕнтен ăçтан килнине, ăçта кайнине ыйтса пĕлет.

Малалла каятпăр. Умра ялсовет исполкомĕн канцелярийĕ, вулав çурчĕ. Вĕсемпе хирĕçле — колхоз канцелярийĕ. Анчах нихăшинче те çутă курăнмасть. Ялсовет канцелярине кĕретпĕр. Палланăран пулас, кунта пирĕнтен никам та нимех те ыйтмарĕ. Ялсовет исполкомĕн членĕ дежурнăй Александра Алексеева юлташ çеç эпир ялсовета çак вăхăтра мĕн тума килнине ăçта кайнине ыйтса пĕлет.

— Кам пĕлет, такам темле ĕçпе çӳрет. Тĕрĕслемеллех çав, — терĕ Алексеева юлташ.

Депутат-дежурнăйпа пĕрле исполнитель Васса Федорова тата унăн ачи Юрик лараççĕ. Вăхăчĕпе вĕсем тула тухса пăхаççĕ, сас-чӳ итлеççĕ.

— Килте пĕччен выртас килмест. Кунта аван, ыйăх килмест. Тен пĕр вăхăтрах исполнителĕн темиçе çĕре çитмелле пулать. Ун пек чухне ăна эпĕ те пулăшма пултаратăп, — терĕ 12 çулхи Юрик.

Вăхăт çурçĕр иртсе пĕр сехет тĕлнелле çывхарать. Эпир Хутар ялсовет исполкомĕн канцелярийĕнчен тухса, колхоз витисем патнелле утатпăр. Таврара паçăрхин пекех тĕттĕм, нимĕнле сас та илтĕнмест.

— Хуллентерех, витесем патне çывхаратпăр, — асăрхаттарать пире пожарнăй команда начальникĕ Мурза юлташ. — Эпир ку енчен кĕретпĕр. Ман шутпа вăл лешъенчи витесем айккинче тăрать.

Каласа чăнăнса, кăштах малалла каятпăр. Çуртсем курăнма пуçласçĕ. Тепĕр 30—40 метртан вылăх картишĕ пуçланса каять. Çак самантра шăп эпир пырса кĕрес тенĕ çĕртен «Стой!» тенĕ сасă илтĕнет. Унччен те пулмасть, пирĕн умма хура сухаллă çын тухса тăрать. Сăнран пăхсан ватă темелле ăна. Анчах куçĕсем витĕр кураççĕ иккен.

— Эсир мĕн тума килтĕр? Сире мĕн кирлĕ? — ыйтать мучи. Урăх нимĕн те кирлĕ мар ăна. Вăл санран тивĕçлĕ ответ çеç кĕтет.

— Халь кунта эпĕ хуçа. Хуть те кам килтĕр, никама та витесене, картишне ямастăп. Мĕншĕн тесен, кунти пурлăхшăн эпĕ ответлă, — тет вăл пожарнăй команда начальникне.

Тĕрĕс тăвать Гаврил Трофимович. Ăна колхоз витисене хураллама шанса панă. Çав шанăçа вăл тивĕçлĕн пурнăçласа пырать. Каç пулсан вара ун патне ан та пыр. Темĕнле майпа йăпшăнса пырсан та вăл сисетех.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсен итемĕ çинче çапнă ыраш куписем, капансем. Мĕнле хаклă пурлăх выртать кунта! Ăна колхозниксен вăйĕпе туса илнĕ. Уншăн сахал мар тăрăшнă.

Итем çинче Николай Алексеевич хурал тăрать. Ватă ĕнтĕ вăл, 60 çул патнеллех çывхарнă. Анчах ĕçре çамрăккисенчен юлмасть, куçĕ те витĕр курать. Кăнтăрла акă вăл уйран кĕлте турттарчĕ, çамрăксемпе ăмăртса ĕçлерĕ. Халь вăл колхозниксем пуçтарса кĕртнĕ тырпула сыхлать.

— Тĕлĕнмелле вăл мучирен, — теççĕ ун çинчен çамрăксем. — Каç та, кăнтăрла та ĕçре, çывăрма та пĕлмест.

Çакă ватă колхозник сыхласа тăракан итем патнерех çывхаратпăр. Каллех сасă илтĕнет:

— Кам унта?

Николай Алексеевич васкасах пирĕн пата утса пырать. Пире кĕскен ыйтусем парать.

— Эпĕ тĕрĕслеме килесрен мар, итем çинчи пурлăха сыхлатăп. Ăçтан çывăратăн кунта. Çывăрасси пулĕ. Тырпулсене тĕплĕн пуçтарса кĕртетпĕр те акă, ун чухне канма та юрĕ,—терĕ колхоз хуралçи.

Тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш бригадăсен итемĕ çинче Федор Петров хурал тăрать. Ун çинчен те ытлашши нимех те каламалли çук. Вăл та, ыттисем пекех, колхоз пурлăхне чылайранпа хураллать. Кăнтăрла вара, кăшт выртса канать-и, е çаплипех ирттерсе ярать, вăл колхоз производствине ĕçлеме тухать.

Çавăн пек сыхласçĕ Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз хуралçисем хăйсен пурлăхне, хăйсен телейлĕ те пуян пурнăçне. Хуть те хăш кĕтессине пыр, фермăсене-и, амбарсем, çĕмĕлсем патне-и, е пахча-çимĕçсем ӳсекен вырăна, пур çĕрте те çирĕп хурал. Ял хушшинче, общественлă çуртсенче те дежурнăйсем лараççĕ, Вĕсем ирччен куç хупмасăр тăраççĕ. Пĕтĕмпех вĕсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пыраççĕ.

Кăвак шуçăм киле пуçласан ял халăхĕ ыйăран вăранать. Хаваслă колхозниксемпе колхозницăсем уя, итемсем çине тухаççĕ. Колхозра хĕрӳллĕ ĕç кунĕ пуçланать. Çакăн чухне тин варă каçхи хуралçăсем хăйсен ĕçĕсенчен пушанаççĕ.

Хар. ЛИСИН.
С. БАТЬКОВ.

Ответлă редакторăн обязанноçĕсене туса пыраканĕ С. К. КОНСТАНТИНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5558

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 448. Ф. б. 98 А 84 п. л.